# Василий Васькин
# (1917 -  1942)





**Василий Васькин** (Василий Никитич Никитин) 1917 çупхи нарăсăн 22-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Шывпуçĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

1931 çулта Канаш районĕнчи Энтриялĕнчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă, 1931-1935 çулсенче Улатăрти педагогика техникумĕнче вĕреннĕ. 1935-1939 çулсенче Шывпуçĕнчи тупли мар вăтам шкулта, 1939-1941 çулсенче Канаш районĕнчи Чарпуçĕнчи вăтам шкулта чăваш чĕлхи вĕрентнĕ. 1939-1940 çулсенче Чăвашсен педагогика институтĕнче чĕлхепе литература факультетĕнче вĕреннĕ.

1936-1940 çулсенче çамрăк поэтăн сăввисем «Пионер сасси» тата «Çамрăк большевик» хаçатсенче пичетленсе пынă. 1934-1940 çулсенче В.Васькин граждан вăрçи паттăрĕсем çинчен «Сергей Лазо» поэма çырнă.



1961 çулта Чăваш АССР кĕнеке издательстви, поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисене суйласа илсе, «Сăвăсем» кĕнеке кăларнă.


СЕРДЦЕ, ПРОБИТОЕ ПУЛЕЙ


В. ВАСЬКИН
Сăвăсем


ЮЛАШКИ ЮН
ТУМЛАМĔЧЧЕН

1941 çулта, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансан, поэт фронта тухса кайнă. 1942 çулхи кĕркунне Конотоп хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенчен пĕринче В.Васькин паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Çăлкуçĕ

Каçĕ çутă та пит уçă,
Шăплăхра итле, сăна —
Çуталса выртать çăлкуçĕ,
Çав каçран та çутă, уçă
Шыв юхать хуллен кăна.
Çăлтăрсем йăл-йăл çиçеççĕ,
Алтăр çăлтăрне тытса
Çак шыва тытса ĕçесчĕ,
Ал çитмен пирки-çке эпĕ
Ун шывне ĕçеп выртса.

Аса илни

Кăвак конверт çӳхе те çăмăл,
Чăтать-ши йывăр шухăша?
Çыру çыратăп... Хăвăн кăмăл
Пулсан, пусарччĕ ман ăша.

Асрах лĕп каç, асрах-ха эсĕ,
Çаплах, çаплах асилтерен.
Эпир иленнĕ сад кĕтесĕ
Пире кĕтет халь каçсерен.

Халь хатĕрех сип-симĕс çулçă
Пире курсассăн ал çупма.
Кĕтетĕп эп те, çывăх тусăм,
Сана лартасчĕ хам çума.

Эс кайрăн... Халĕ вĕренетĕн,
Ман шухăш çывăх, ху — инçе.
Хăçан килетĕн? Пĕлтермерĕн
Эс темшĕн иртнĕ хут çинче.



Пирĕн ентешĕмĕр Василий Никитич Васькин (Никитин) вăтăрмĕш çулсенче чăваш поэзийĕн анлă çулĕ çине тухнă, ытларах та ытларах çĕршывăн, халăхăн ĕмĕт-шухăшĕпе çуннă, ĕç çыннисене куллен-кун пулăшакан вăй пулса малалла чĕннĕ сăвăçсенчен пĕри.

Сăвăç халăхăн чĕрĕ сассипе, тавракурăмăпе усă курса сăнарсене ĕненмелле, вулакана çывăх, ăнланмалла, асра юлмалла

